Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

64 (7918) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи август (çурла) уйăхĕн 20-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕçлĕ çул çӳрев

## Района аталантармалли çĕнĕ тĕллевсене палăртрĕ



**Августăн 18-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ М.В. Игнатьев ĕçлĕ çул çӳревпе Муркаш районĕнче пулчĕ. Районта республика ертӳçи вырма ĕçĕсемпе, çĕнĕ вĕренӳ çулне епле хатĕрленнипе интересленчĕ, ялта пурăнакан предприниматель-семпе курса калаçрĕ, муниципалитета аталанма май паракан çул-йĕрсене пăхса тухса малашнехи тĕллевсене палăртрĕ.**

Ĕçлĕ çул çӳрев Сĕнтĕрте вырнаçнă чикĕллĕ яваплăхлă «Сундырь-хлеб» обществăран пуçланчĕ. «Мĕн хакпа сутатăр çăкăра?»– çак ыйтăва чи малтан пачĕ Михаил Васильевич. «Орловский» çăкăр тата «Простой» батон – 12-шер тенкĕпе»,– хурав пулчĕ предприяти директорĕн Л.Г. Ильгечкинăн.

Ку предприяти ăнăçлă ĕçлекенсенчен пĕри. 1965 çулта йĕркеленĕ предприятире паян 74 çын тăрăшать. Предприяти кунсерен 6,6 тонна çăкăрпа ытти продукци туса кăларать. Ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçин шайĕ 10 пин те 300 тенкĕпе танлашать.

Республика ертӳçи çăкăр пĕçерекен цехра пулса курчĕ, унта вăй хуракансемпе калаçрĕ. Леонид Ильгечкин ертӳçĕ малашнехи тĕллевсемпе паллаштарчĕ, хăйсен продукцине малашне Шупашкар тата Мари Эл пасарĕсенче те вырнаçтарма шухăш пурри пирки пĕлтерчĕ.

Михаил Васильевич Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан çынсемпе калаçрĕ, вĕсене кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравсем пачĕ. Президент Мăн Сĕнтĕрте ялта чӳречесемпе алăксене пластикран туса хатĕрлекен производствăпа та паллашрĕ. Çак ĕçе кунта Шупашкарти «Карина» фирма йĕркеленĕ. Ку фирма шкулсене, больницăсене пластикран тунă паха продукципе тивĕçтерсе тăрать. Район администрацийĕпе килĕштерсе ĕçлесе пынине те палăртса хăварчĕ Игорь Каринкин ертӳçĕ. «Паян ялсенче çакăн пек предприятисем уçăлни питĕ аван. Вĕсене май килнĕ таран пулăшма тăрăшмалла. Вĕсем тăрăшнипе тавралăхри пăрахăçа тухнă çĕр лаптăкĕсем те илемленеççĕ»,– палăртрĕ Михаил Васильевич.

Хыççăн Чăваш Республикин Президенчĕ Мăн Сĕнтĕрти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта та пулса курчĕ, ăна çĕнĕ вĕренӳ çулне епле хатĕрлесе çитернипе интересленчĕ. Тепĕр икĕ эрнерен 43 ача пĕрремĕш хут парта хушшине ларĕç. Пĕтĕмпе вара çĕнĕ вĕренӳ çулне 351 ача килмелле. Михаил Игнатьев физика, хими тата ытти хăш-пĕр предметсемпе уроксем ирттермелли кабинетсене пăхса çаврăнчĕ. Классем пĕтĕмпех хатĕр, вĕсене кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтернĕ. Вĕрентӳ ĕçченĕсем хальхи пурнăçпа тан пыма тăрăшаççĕ, кашни учителĕн хăйĕн сайчĕ пур.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: М.В. Игнатьев «Оринино» хуçалăхра тырă акас ĕçсемпе паллашать.**

Августăн 22-мĕшĕнче – РФ Патшалăх ялавĕн кунĕ

## Патшалăх ялавĕн историйĕ пуян

Раççейре çуллен августăн 22-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунне паллă тăваççĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 1994 çулхи августăн 20-мĕшĕнчи 1714 № «Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунĕ çинчен» Указĕпе çирĕплетнĕ.

1991 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Мускавра Шурă çурт умĕнче официаллă йĕркепе пĕрремĕш хут Раççейăн виçĕ тĕсрен тăракан ялавне çĕкленĕ. Унччен патшалăх символĕ шутĕнче çурлапа мăлатук ӳкернĕ хĕрлĕ тĕслĕ ялав пулнă. Çав кун РСФСР Аслă Канашĕн чрезвычайлă сессийĕнче йышăну тунă, хĕрлĕ, кăвак, шурă тĕссенчен тăракан ялава Раççейăн символĕ тесе палăртнă.

Чи малтан шурă, кăвак, хĕрлĕ тĕссемлĕ ялава вырăссем «Орел» çар карапĕ çинче Алексей Михайлович патшара пулнă чухне (1645–1676 çулсенче патшалăха ертсе пынă) çĕкленĕ. «Орела» çĕнĕ ялавпа нумаях ишме пӳрмен: Атăл тăрăх Астрахане çити ансан ăна Степан Разин майлă çынсем вут тивертсе çунтарса янă.

Хаксем

## Ăçта йӳнĕрех?

**Районта вырнаçнă суту-илӳ точкисенчи (лавкка тата пасар) августăн 9-мĕшĕ тĕлне социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене танлаштарса кăтартни.**

**Колонкăсенче: 1.Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем; 2. «Самообслуживание» лавкка; 3. «Продукты №1»; 4. «Визит»; 5.«Елена»; 6. Муркаш пасарĕ.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх(тукмаксăр пуçне),кг | 99 | 86 | 110 | – | 100 |
| Шăнтнă пулă, кг | 69 | 65 | 65 | – | 55 |
| Услам çу, кг | – | 240 | 156 | 207 | 195 |
| Тип çу, кг | 63,5 | 69 | 67 | 55 | 65 |
| Сĕт, çу шайĕ 3,2 проц. пĕчĕк. кг | 29,5 | 29 | 30 | 31,5 | 30 |
| Çăмарта, 10 шт | 21 | 24 | 21 | 20 | 21 |
| Сахăр песукĕ, кг | 38 | 37 | 38 | 36,5 | 37 |
| Тăвар, кг | 7 | 7 | 7,9 | 9 | 6 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 18 | 16,5 | 17 | 20 | 18 |
| Рис, кг | 33 | 36 | 28 | 34 | 28 |
| Вир кĕрпи, кг | – | 45 | 46 | – | 46 |
| Хура тулă кĕрпи, кг | – | 91 | 89 | – | 95 |
| Вермишель, кг | 22 | 22 | 19 | 22,5 | 21 |
| Çĕр улми, кг | – | – | 20 | 20 | 20 |
| Шурă пуçлă купăста, кг | 13 | 11 | 15 | 10 | 15 |
| Пуçлă сухан, кг | 31 | 30 | 29 | 29 | 30 |
| Пан улми, кг | 62 | 67 | 56 | 65 | 60 |
| Кишĕр, кг | – | 34 | 35 | 35 | 35 |

Пресс-конференци

## Тĕрлĕ ыйтусем çинче чарăнчĕ

**Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен Президенчĕн должноçне йышăннăранпа çулталăк çитнĕ ятпа пресс-конференци ирттерчĕ. Тĕл пулу Чăваш Республикин наци библиотекинче иртрĕ. Пресс-коференцие районсемпе хуласенчи пичет тата электронлă массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем хутшăнчĕç.**

Пресс-конференцие уçнă май Президент республика экономика кризисĕнчен пĕчĕккĕн тухса пынине палăртрĕ. Кăтартусем ӳсеççĕ. Республика Правительстви хăй çине илнĕ ыйтусене пĕтĕмпех татса пама тăрăшать.

Вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕн ĕçĕсене тĕпрен çĕнетсе улăштарас задача та пурнăçланать. Чăваш Енĕн патшалăх умĕнчи парăмĕсем чакаççĕ. Çак вăхăта республикăра тĕллевлĕ 64 программа вăйра. «Çитес вăхăтра тăлăх ачасен çурт-йĕр ыйтăвне пĕтĕмпех татса парăпăр. Ăна валли укçа-тенкĕ çук мар. Ача сачĕсенче вырăн çитменнин ыйтăвне те тепĕр виçĕ çул хушшинче татса пама пултаратпăр»,– палăртрĕ Президент.

Массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсемпе тĕл пулнă май тĕрлĕ темăпа сахал мар ыйту хускатрĕ. Вăл шутра республикăн экономикăпа социаллă аталанăвне те тишкерчĕ. Михаил Игнатьев çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе нумай ĕç тума пултарнине палăртрĕ. Бюджет сферинче вăй хуракансен шалăвĕн шайне ӳстерни те ку тĕлĕшпе хăйне май пулăшу пулса тăрать. Предприниматель ĕçне-хĕлне аталантарма та майсем туса пама тăрăшаççĕ.

Чăваш телерадиокомпанийĕн ĕçне пуçăнассин ыйтăвĕ те тĕл пулура хурав тупрĕ. Президент ку ыйтăва авăн уйăхĕн вĕçĕнче е чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче татса пама май пурри пирки хыпарларĕ.

Икĕ сехете яхăн тăсăлнă пресс-конференцире Михаил Игнатьев Президент журналистсен вăтăра яхăн ыйтăвне хуравларĕ. Юлашкинчен уçă калаçушăн тав тунă май çапла каларĕ: «Пирĕн сирĕнпе пĕр тĕллев – çынсен пурнăç шайне хăпартса пырасси, вĕсен условийĕсене лайăхлатасси».

**В. ЛЕОНИДОВ.**

Район уй-хирĕсенче

## Орининсем тырă акаççĕ

Оперативлă даннăйсем тăрăх ĕнерхи кун тĕлне тĕшĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 7853 гектар (51,8 процент) çулнă тата вырнă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен ку ĕçре «Восток» хуçалăх малта (81 процент).

Тырă пĕтĕмпе 21221 тонна çапса тĕшĕленĕ. Тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 27 центнерпа танлашать.

Улăма 5226 гектар çинчен (çапса тĕшĕленин 67 проценчĕ) пухса тирпейленĕ.

Уй-хирте 46 комбайн ĕçлет.

Кĕрхи культурăсем акма 3232 гектар (49 процент) çĕр хатĕрленĕ. «Оринино» хуçалăхра кĕр акине тухнă.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă юратнă аннене, кукамая – Кĕрекаç ялĕнче пурăнакан **Мария Тимофеевна СЫЛГАЧЕВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăлтуйăмлă пулмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Малашне те ачусемпе, мăнукусемпе, мĕн пур тăванпа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, асаннене, кукамая, çывăх тăвана – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Нина Петровна ЕВСТАФЬЕВĂНА** 80 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Ĕмĕрӳ шурă пир пек вăрăм, пурнăçу хушпу кĕмĕлĕ пек çутă, сывлăху юман пек çирĕп пултăр, ватлăху канлĕ килтĕр, чир-чĕр санран пăрăнса çӳретĕр.

Чи илемлĕ сăмахсем калатпăр,  
Чĕререн сире сума суса.  
Ырлăх-сывлăх, телей çеç сунатпăр,  
Пурăнсамăр ĕмĕр савăнса.

**Саламлаканĕсем: пилĕк ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, вун пĕр мăнукĕ, кĕçĕн мăнукĕсем, мĕн пур тăванĕсем.**



Муркаш салинче пурăнакан «Солнышко» ача сачĕн ĕçченĕ – **Леонилла Владимировна НИКОЛАЕВА** çак кунсенче хăйĕн сумлă юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа эпир ăна ăшшăн саламлатпăр.

Леонилла Владимировна, Турă сире вăй-хăват парсах тăтăрччĕ татах нумай çул çут тĕнче çутипе, сар хĕвел ăшшипе савăнса пурăнма.

**Саламлаканĕсем: Максимовсемпе Шароновсен çемйисем тата Любăпа Аня.**



Савнă мăшăра, юратнă аттене, асаттене – Атапай ялĕнче пурăнакан **Николай Александрович ГАВРИЛОВА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн ыталаса чаплă юбилей ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр, кун-çулу вăрăм та такăр пултăр. Вăрăм ĕмĕр сунатпăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Тавах сана пурришĕн.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, виçĕ мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Ĕç те ăнать, сывлăх та упранать



Усă курма сĕнетĕп

***Пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă çын тăтăш пахчара тăрмашать. Çамрăк çулсенчи тата сывлăх енчен аптраман çынсемшĕн ку ĕç йывăрах мар темелле, аслă ăрурисемшĕн вара пачах урăхла. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Катькас ял тăрăхĕнчи Чурикасси ялĕнчи Георгий Павлович Храмов ак çакăн йышши ĕç хатĕрĕпе пахчара тăрмашть.***

***– Кун пек ĕç хатĕрĕсем манăн тĕрлĕрен, чылай тĕрлĕ ĕç пурнăçлама пулать вĕсемпе. Ĕçе çăмăллатма, хăвăртлатма май паракан çĕр улми кăлармалли, çĕр куpаламалли, çум курăк тăпăлтармалли тата ытти хатĕрсем сывлăха сыхлама та май параççĕ, тупăш шайне те ӳстереççĕ. Пахчара вĕсемпе ĕçлесен ытлашши ĕшенместĕн, çавăнпа та эпĕ харпăр хăйне упрас текенсене çакăн йышши ĕç хатĕрĕсемпе усă курма сĕнетĕп, – терĕ Георгий Павлович чечексем хушшинчи ретсене кăпкалатнă майăн. Сăмах май палăртса хăвармалла, çитес эрне кунхи пасарта вăл усă куракан ĕç хатĕрĕсемпе тĕплĕнрех паллашма тата туянма пулать.***

***Р. ИЛЛАРИОНОВА.***

***Автор сăн ӳкерчĕкĕ.***

Пахчара

## Виктори çырли лартма вăхăт

Çак çырлана вегетативлă меслетпе ĕрчетеççĕ. Тĕп хунавран çулла çĕнĕ хунав нумай тухать, тĕп тунана çывăххи вара чи лайăххи шутланать. Калчана тăпрара нӳрĕк чылай чухне, августăн иккĕмĕш çуррипче лартсан аван. Çанталăк типĕ тăрать пулсан кăшт каярах юлса лартмалла. Иртерех лартсан тепĕр çул çырла лайăххах пулать, çавăнпа та пахчари çырла тĕммин хунавĕсене тăпра çумне пусăрăнтармалла. Çакăн пек тусан хунав ыттисенчен 1 – 2 эрне маларах пулать. Йăран çине пĕр-пĕрин хушшине 15 – 20 сантиметр, рет хушшине 40 сантиметр чухлĕ хăварса, тымарсенчен тăпрана силлемесĕртерех лартмалла. Калчана çăра лартсан йĕпе çул тĕрлĕ чир-чĕр сарăлать. Тĕп тĕмĕ çумĕнчи ытлашши хунавсене татмалла, унсăрăн çырла вĕтĕ, тухăçĕ пĕчĕк пулать. Çуркуне тăпра час ăшăнса çитменнипе çырлана час лартма май килмест. Çавăнпа та ку ĕçе сентябрĕн 5 – 10 мĕшĕсенчен кая юлмасăр тумалла. Каярах юлса лартнă тĕмĕ аталанса çитеймест, япăх хĕл каçать. Калча пĕлĕтлĕ кун лартсан лайăх чĕрĕлет, çумăр хыççăн е каç пулас умĕн, шăрăх мар вăхăтра куçарсан тата аван. Лартнă чухне тымарсене чăмакка туса хума юрамасть, вĕсене тӳрлетмелле. Папкасене тăпрапа витмелле мар, унсăрăн тĕмĕ типсе хăрать. Лартас умĕн шăтăка шыв ярсан аван. Лартнă хыççăн шăварсан, çиелти тăпра хытса ларать. Ӳсен-тăран папака аяла пулнипе пулманнине, çӳллĕ е ытла тарăн лартнине тĕрĕслемелле. Кирлĕ пулсан ӳсен-тăрана тӳрлетсе лартмалла, типсе кайнисем вырăнне урăххисене лартмалла. Типĕ çанталăкра тăтăшах шăвармалла. 20 тĕп çырлана шăварма пĕр витре шыв кирлĕ.

Кĕркунне ăна тĕрлĕ удобренипе апатлантармалла, манмалла мар, мĕншĕн тесен çырла туса тĕмĕ самай имшерленнĕ. Çырла татнă хыççăн çумăр нумай çунă çулсенче çулсене çулни лайăх, анчах та тĕп папакасене амантмалла мар. Типĕ çул вара ан çулăр. Çавăн пекех çырлана пĕр ана çинче тăватă çултан ытла çитĕнтермелле мар.

**Н. ПЕТРОВА,**
**пахчаçă.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Пирĕн çемье

Ку – ман асатте,
Ку – ман асанне.
Пăхăр-ха, курăр-ха:
Эпĕ – «сурăх путекки»,
Татах пур-ши ман пекки?

Ирех тăрап, пит çăвап,
Анне çумне йăпшăнап.
Атте хырать сухалне,
Вырнаçап чĕркуç çине,
Чĕпĕтетĕп сăмсине.

Асатте юмах ярать,
Тар юхтарса чей ĕçет.
Асанне алсиш çыхать,
Пичче сăвă вĕренет,
Аппа кукăль пĕçерет.

Атте ларать руль умне,
Анне уçать хапхине.
Вĕсен ĕçе каймалла,
Ман ăсатса ямалла,
Хыççăн çӳпĕ шăлмалла.

Чупса тухап урама
Кукăр хӳре Кампурпа.
Кĕçех кайăп эп шкула,
Вăл та чупĕ ман умра
Вĕре-вĕре ăс пухма.

Ку – ман асатте,
Ку – ман асанне.
Пăхăр-ха, итлĕр-ха:
Эпĕ – «сурăх путекки»,
Туслă çемье тĕрекки.

**Василий МАКСИМОВ.**

## Вăт ку помидор!



***Пĕр помидорĕ – çур килограмм ытла!***

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

Православи кĕтесĕ

## Пан улми Спасĕ

Эпир çак уяв августăн 19-мĕшĕнче пулнине пĕлетпĕр. Вăл Иисус Христос Турă çĕнелсе улшăннă кун (Преображение Господне) – православи тĕнĕн чи пĕлтерĕшлĕ вун икĕ уявĕнчен пĕри пулса тăрать.

Иисус Христос Голгоф тăвĕ çине хăйне пăталассине пĕлсе, унчен хăйĕн вĕренекенĕсемпе – Петр, Иоанн тата Иаков пулас апостолсемпе – Фавор тăвĕ çине улăхнă. Унăн вĕренекенĕсем вара ту патĕнчех çывăрса каяççĕ. Вăранаççĕ те тĕлĕнсе каяççĕ, вĕсем Иисус Христосăн пичĕ те, çи-пуçĕ те тĕлĕнмелле илемлĕн, хĕвел евĕр çуталнине асăрхаççĕ. Çавăн пекех Вăл Моисейпа тата Илья пророксемпе калаçнине кураççĕ. Çавăнтах вара вĕсен куçне курăнман Турă Ашшĕпе Святой Сывлăш Турри пулнă.

Иисус Христос çакăн евĕр çĕнелсе улшăнни хăйĕн пек шухăшлакансен шухăшĕсене тĕпрен çĕнетсе улăштарнипе пĕр тан килет. Ырăлăх, сăваплăх енне çĕнелсе улшăнма кая юлмани çинчен калать.

Çак уяв кун вара чиркӳсенче халăх ялан йышлă. Кунта çынсем пан улмисене, грушăсене тата иçĕм çырлисене илсе килеççĕ.

Маларах вара, Совет тапхăрĕччен, августăн 19-мĕшĕччен пан улми çиме юраманнине çирĕп пăхăннă. Халĕ та хăш-пĕр çынсем çак йăлана пăхăнаççĕ. Пан улми Спасĕнче халăх пĕрле савăннă, пĕр-пĕрне çак çимĕçпе хăналанă. Кукăль таврашне те ăна хушса пĕçернĕ. Ĕлĕк вара халăх хушшинче ырă йăла çӳренĕ, пуян çынсем пан улмие лавĕ-лавĕпех чухăн тата чирлĕ çынсене валеçсе панă.

Сĕнетĕп

## Тутлă варени

Улма-çырла кăçал ăнса пулчĕ, халĕ вара ăна хĕле валли хатĕрлес хĕрӳ тапхăр пырать. Ку ĕçре кашни кил хуçи хĕрарăмĕ хăйне май ăсталăх кăтартма пултарать. Эпĕ те хаçат вулакансене хамăн вăрттăнлăхпа паллаштарас терĕм.

Варени пĕçернĕ çĕре желатин хушсан питĕ техĕмлĕ çимĕç пулать. Ăна кирек епле çырла çине яма та юрать. Пĕршер килограмм çырла тата сахăр песукĕ илетĕп, ун çине пĕр пакет желатин яратăп. Груша тата чие варенийĕ валли пĕр пакет çурă ярсан аван. Техĕмлĕ варени вăтăр минутра пиçсе çитет. Вĕриллех ăна кантăк савăтсем çине яратăп. Çавăн пекех унта лимон кислоти яма юрать.

**Н. СЕМЕНОВА.**

Пахчаçă сĕнĕвĕсем

## Купăста çурăлмасть

Кĕркунне купăста пусĕ пулса çитсен çурăлма пуçлать. Ун пек чухне купăстана тытса тымарĕпе пĕрле çавăрмалла. Пăшăрханма кирлĕ мар, купăста уншăн шанмасть, анчах та çурăлмасть. Унăн пусĕ çине пысăк çулçă витĕр.

## Качака усрар

Юлашки çулсенче ялта качака усракан йышланчĕ. Унăн сĕчĕ питĕ усăллă, уйрăмах кăкăр ачисемшĕн. Унра кальци шайĕ пысăк пулнăран ачасене рахитран лайăх упрать. Ĕне сĕчĕ те пысăк пахалăхлă, анчах та ача организмĕ качака сĕтне лайăхрах йышăнать. Унра çу хисепĕ 4 – 5 процентран пусласа 7 таран. Ку сĕтрен тĕрлĕ апатçимĕç хатĕрлеме пулать.

Качакан чĕрĕ виçи вăтамран 40 – 45 килограмм. Вăл апата тата шыва тиркет. Качакаран çулталăкра 400 литр чухлĕ сĕт туса илме пулать. Лайăх пăхсан вара 500 – 700 литр таран антарать. Вĕсен ăрачĕ тĕрлĕрен, уйрăмах сĕтлĕ ăратлинчен пин литр чухлĕ сĕт туса илеççĕ. Ăна хупма уйрăмах ăшă вите кирлĕ мар, сурăх тăнă сарайĕнче те аван пурăнать.

## Кактус ӳстерер

**Пĕлĕшсем патне кайсан кактус ытла та илемлĕ çурăлса ларнине куртăм. Манăн килте вара нихăçан та çурăлмасть.**

**Н. ИВАНОВА.**
**Муркаш сали.**

Кактус хăйне майлă илемлĕ чечек. Вĕсен сорчĕ питĕ нумай, анчах та кирек епле сорт та вăрах ӳсет. Ăна валли янкăр çутă кун ытларах кирлĕ. Хĕл кунĕнче вара вăл канать, ун чухне ăна апатлантарни те, çутă та ытлах кирлĕ мар, çавăнпа та хĕлле сулхăн вырăна лартмалла. Чечек ытлашши пысăк савăта кăмăлламасть. Чӳлмек тĕпне шăтарни кактуса питĕ кирлĕ. Ăна лартмалли тăпрана шурă хăйăрпа, йывăç кĕлĕпе, торфпа хутăштармалла. Çӳллĕ ӳсекен кактуса тĕкĕ çумне çыхмалла. Ăна куçарса лартиччен шăвармалла мар тата хĕвел çинче тытмалла мар.

Ăна шăварма çемçе шыв кирлĕ. Вăл çумăр, юр е вĕретсе сивĕтнĕ шыв пулма пултарать. Çавăн пекех кранри шыва тăрăлтарни те каять. Кактуса çуркунне вĕçĕнчен пуçласа кĕркуннеччен кăна шăвармалла. Тĕлĕнмелле пулин те хĕлле ăна пачах та шăвармалла мар. Ытлашши шăвариччен шăварса çитерменни лайăхрах та вĕсемшĕн.

Кактус сивĕ сывлăшран пачах та хăрамасть. Хĕл каçнă хыççăн вара ăна çуркуннехи хĕвеле тата ăшăна хăнăхма йывăртарах та.

Ăна ĕрчетме йывăрах мар. Тĕп туна çумĕнче вĕтĕ хунавсем чылай тухаççĕ. Тĕрĕс пăхнă кактус çулталăкра пĕрре çеç мар çурăлать. Кашни сортăн чечекĕ хăйне май илемлĕ. Унăн чечекĕ питĕ хитре, анчах шел пулин те хăш-пĕр сортăн чечекĕ пĕр кунран ытла лармасть.

**С. ШАПОШНИКОВА.**

Полици хроникинчен

## Кишĕрĕн те «ура» пур иккен

Чĕр чун икĕ е тăватă ураллă пулать, çавăнпа та вăл хытă чупать. Пĕлес килет, пахчари кишĕрĕн миçе ура ӳсет-ши? Унăн тупсăмне кăшт каярах пĕлĕпĕр, халĕ вара Токшик ялĕнчи пĕр пахчари ана çинчен çирĕм килограма яхăн кишĕр çухалнине кăна пĕлетпĕр-ха. Кишĕр акса ӳстерне хĕрарăмăн шӳт тума пачах та кăмăл çук халĕ. «Кукăр алăлли» тата епле-ха çийĕ ют çын ани çинчен кăларса килнĕ кишĕр куклине, пырне лармĕши вара вăрланă çимĕç. Нивушлĕ çак намăссăр çын кишĕр хăй акса ӳстерейместь пахчара. Халĕ ку тĕлĕшпе йĕрке хуралçисем тимлеççĕ.

## Урлă-пирлĕ сăмах, алăра – çĕçĕ

Вăхăт каç еннелле сулăнсан Уйкас Хачăк ялĕнчи çирĕм çулран кăшт кăна иртме ĕлкĕрнĕ çамрăк мăшăр хушшинче харкашу тухать, хирĕçĕве куçать. Арçын хăй вăйне кăтартас тесе-ши вĕлерессипе хăратать, «вĕлеретĕп, касса пăрахатăп» тесе кăшкăрса алла çĕçĕ тытса хăлаçланать. Харкашу вырăнĕнчен каярах икĕ çĕçĕ тупаççĕ. Çын çине алă çĕклекен арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Амăшне хĕненĕ

Кун çути парнеленĕ амăшĕ хăш чухне çĕр çывăрмасăр ачине тытса лăпкаса ларать, ырă-сывă ӳстерсе ватлăх кунĕнче унăн хӳтлĕхĕнче пурăнма ĕмĕтленет. Шел пулин те çутă ĕмĕт пурин те чăна килмест.

Нискасси ялĕнчи çамрăк çулсенчи пĕр арçын çĕрле урамрах намăса çухатса амăшне хĕнет, сывлăхне сиен кӳрет. Инкек тӳснĕскерĕн тĕрлĕ сурансемпе тĕп больницăна кайса пулăшу ыйтма тивет. Кирек епле кӳренӳ, тарăху пулсан та çав териех çын картĕнчен тухма пулать-ши, уйрăмах аннепе. Йĕрке хуралçисем халĕ вăл пӳтсĕр тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарассипе тимлеççĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Прокуратурăра

## Ултав енне пăрăнсан

Прокуратура ĕçченĕсем черетлĕ тĕрĕслев ирттернĕ май пĕр ял тăрăхĕнчи ултава çиеле кăларнă. 1974 çулта çуралнă пĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ 2009 çулта ял клубĕнчи юсав ĕçĕсем пирки ултав документ тăратнă. Çавна май подрядчик организацийĕн счечĕ çине маларах палăртнă укçа калăпăшне туллин куçарнă. Документ çине алă пуснă вăхăтра вара юсав ĕçĕсене ирттермен те пулнă. Халĕ те вăл ĕç вĕçне çитеймен-ха. Апла пулин те пуçлăх организацие штрафласси пирки те тимлемен, кунти ĕç-хĕл вара ытлашшипех шала кĕнĕ.

Акă ăçталла куçать те ĕнтĕ бюджет укçи-тенки пуçлăх ответсăрлăхне, çăмăлттайлăхне пула, халăх вара вĕсене шанать, вĕсенчен курăмлă ĕçсем кĕтет. Вĕсем çемçе пукан йышăнса халăх хыснине унталла-кунталла куçараççĕ. Ял культурине сыхлаканни вара Культура çурчĕ пулса тăрать. Апла пулсан ку пуçлăх тăван халăх культурине хĕмлентерме мар, сӳнтерме тăрăшни пулмасть-ши?

**Э. СОКРАШКИН,**
**район прокурорĕн аслă пулăшуçи, 2 класлă юрист.**

Спорт

## Физкультурник кунне халалласа

Пирĕн çĕр-шывра Физкультурник кунне паллă турĕç. Мăн Сĕнтĕр ялĕнче çав кун пысăк спорт уявĕ иртрĕ. Кану кунĕ – çапла ят пачĕç Мăн Сĕнтĕрсем ăна. Физкультурник кунне халалланă ку мероприятие район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ.

Спорт уявĕ 14 сехетре пуçланчĕ. Мероприятисен анлăшĕнче каçхи 8 сехет çитнине те никам та уямарĕ. Шăпах çак вăхăтра уявăн иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланчĕ: ăмăртусем спортăн 7 енĕпе иртрĕç. Хăшĕсем 60, 100 метр чупассипе, теприсем 100 метрлă эстафетăра ăнăçуллăрах пулчĕç.

Ялта пурăнакансем армреслинг ăмăртăвне те кăмăллаççĕ. Арçынсемпе танах хĕрарăмсем те вăй виçрĕç. Кире пуканĕ çĕклессипе вара арçынсем хăйсен вăйне кăтартрĕç. Мăн Сĕнтĕрсем дротиксем ывăтассипе, канат туртассипе хăйсем вăйлăрах пулнине кăтартса пачĕç.

Чăваш эстрадин, Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕн «Картина» вокалпа инструментсен халăх ансамблĕн тата шкул ачисен артисчĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

Кану кунĕнче спортăн кашни енĕпе мала тухнисем дипломсемпе парнесене тивĕçрĕç. Хĕллехи тата çуллахи спартакиадăсен итогĕсене те пĕтĕмлетрĕç. Призлă вырăн йышăннă Мăн Сĕнтĕр, Апчар, Мăн Хураçка ялĕсен командисем дипломсемлĕ тата парнесемлĕ пулчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Мăн Сĕнтĕрсене уявпа саламланă май кун пек активлă кану мелĕпе ытти ял тăрăхĕсенче те усă курма кирлине палăртрĕ.

**Хамăр инф.**




Современный практический журнал для бухгалтера

Журнал “Главная книга”
- выходит 2 раза в месяц
- рекомендуется организациям, применяющим общий или специальные режимы налогообложения

Что выгодно отличает “Главную книгу” от других журналов?

ОБЪЕКТИВНОСТЬ — Материалы подаются с учетом официальных позиций госорганов, мнений экспертов и сложившейся судебной практики. По каждой проблеме рассматриваются все варианты решений, с их плюсами и минусами.

НАГЛЯДНОСТЬ — Статьи сопровождаются примерами, таблицами, схемами и иллюстрациями.

ПРОСТОТА — Понятный язык изложения. Даются пошаговые инструкции.

ОПЕРАТИВНОСТЬ — Актуальная и полная информация о самых важных событиях. Последние изменения законодательства.

ДОСТОВЕРНОСТЬ — Представляет только обоснованные выводы и рекомендации. Все выводы подкреплены ссылками на правовые акты.

Три причины подписаться на “Главную книгу”

ЭТО ВЫГОДНО! — Предоставляется специальная скидка.

ЭТО УДОБНО! — Подписка с любого месяца, на любой срок.

ЭТО ПРОСТО! — Оформление подписки прямо на вашем рабочем месте

Журнал «Главная книга» – верный помощник в ежедневной работе бухгалтера



Наш адрес:
ООО “Фирма “Элис”!
г. Чебоксары, ул. Нижегородская, д.4.
т./факс: 62-35-15, 62-10-83.
“Горячая линия”: 40-66-07, 40-66-08!

кредитный потребительский КАПИТАЛ кооператив граждан
работает на вас
6-23-10
всегда доступные займы
ипотечные займы с использованием материнского капитала
принимаем сбережения под серьёзные проценты
ул. Чапаева, 44 а / 2 8 927 667-48-92
kpkgkapital.ru
работаем с пайщиками

КУПЛЮ ПУХ ПЕРО
новые и старые, мешаные перины и подушки с выездом на дом.
Куриное не предлагать.
Тел.: 8-962-561-81-15. Иван.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 29-50.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-5.


Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:061002:122, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Огадерская, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1421 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:254, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для строительства и обслуживания зданий и сооружений, площадью 565 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

| | суббота 20 августа | | | | воскресенье 21 августа | | | | понедельник 22 августа | | | | вторник 23 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +14 | +13 | +14 | +11 | +9 | +14 | +19 | +14 | +13 | +13 | +16 | +12 | +8 | +12 | +13 | +10 |
| Давление мм | 746 | 745 | 746 | 746 | 746 | 745 | 745 | 744 | 744 | 743 | 744 | 745 | 746 | 746 | 747 | 748 |
| Влажность % | 86 | 98 | 92 | 93 | 100 | 84 | 58 | 68 | 78 | 77 | 57 | 67 | 74 | 68 | 52 | 55 |
| Ветер | С-З | В | С-В | Ю-В | Ю | Ю-В | В | В | В | С-В | С-В | С-В | С | С | С | С |
| м/сек | 3 | 1 | 2 | 3 | 1 | 4 | 4 | 4 | 4 | 6 | 6 | 3 | 4 | 5 | 6 | 3 |
| Солнце восход/заход | | 05:33 | 20:19 | | | 05:35 | 20:16 | | | 05:37 | 20:14 | | | 05:38 | 20:11 | |
| Луна восход/заход | | 21:40 | 13:22 | | | 22:08 | 14:30 | | | 22:45 | 15:35 | | | 23:35 | 16:32 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Пĕлтерӳсем. Объявления


Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-5.

Магазин-салон ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
тел. 8-987-668-04-83
реклама
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, КОЛОНКИ GAZLUX, WOLF, ПЛИТЫ (газ-контроль)
Разработано совместно ОАО "ГАЗПРОМ-РЕГИОНГАЗ" и ОАО НИИ "ГИПРОНИИГАЗ" специально для Российских условий эксплуатации
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ: SIBERIA, ОЧАГ
Выполняем: проекты газификации, квалифицированный монтаж
Доставка и установка плиты - БЕСПЛАТНО, рассрочка оплаты
г. Чебоксары, Сев. ярмарка, тп №10
тел. 8-951-998-90-77

Уважаемые покупатели! Моргаушское райпо приглашает Вас 23 августа 2011 года на открытие магазина «Волна» по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 8. Начало в 15-00 часов. Вас ждет концертная программа и розыгрыши призов!

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 12-13.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 8-9.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.

* * *

Пластиковые окна от производителя. Железные двери и ворота. Действуют скидки.
Тел.: 8-927-668-73-42. 1-2.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора.
Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 5-5.

* * *

Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 5-5.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец.
Тел.: 8-905-342-39-43. 4-10.

* * *

Продаю железобетонные кольца разного диаметра. Доставка. Услуги бормашины-траншеекопателя под водогопровод, канализацию.
Тел.: 8-927-845-58-93, 8-927-860-90-70. 4-5.

* * *

Комбайнпа тырă вырса паратпăр тата тулă, урпа сĕлĕ, хывăх, улăм сутатпăр. Тел.: 8-905-199-61-77. 2-2.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.
Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 2-5.

* * *

Требуются водители с личным автомобилем для работы в такси. Тел.: 8-927-667-37-67.

* * *

Требуются монолитчики, каменщики, водители в Москву. Оплата своевременная. Тел.: 8-927-842-29-00.

* * *

Снимем однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Чистоту и порядок гарантируем. Тел.: 8-905-345-16-72.

Требуются рабочие на уборку картофеля. Оплата договорная. Выход с 20 августа по 3 сентября. Тел.: 8-910-399-77-85, 8-904-924-23-61.

* * *

Продаю Газель-фермер 2005 года выпуска в отличном состоянии, двигатель 406, пробег 135 тыс. км., газ-бензин, сигнализация. Продаю земельный участок 35 соток под строительство в д. Шептаки, ул. Новая.
Тел.: 8-903-066-66-04, 62-9-83.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам: 8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...


* * *

Администрация Моргаушского района информирует о предстоящем предоставлении земельных участков в аренду из категории земли сельскохозяйственного назначения для строительства линейно-кабельного сооружения связи волоконно-оптической линии связи (ВОЛС):

- с кадастровым номером 21:17:281001:714, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, площадью 489 кв.м.;
- с кадастровым номером 21:17:000000:328, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, площадью 75 кв.м.;
- с кадастровым номером 21:17:281001:712, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, площадью 3185 кв.м.;
- с кадастровым номером 21:17:281001:711, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, площадью 96 кв.м.;
- с кадастровым номером 21:17:281001:698, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, площадью 1323 кв.м.


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 19.08.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4343.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.